Отдел Национальной Литературы

25-мĕш çул ;ухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ЯНВАРЬ 27 ЮНКУН 20(6257) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

*ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ*

## Нимĕçсен Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе пирĕн войскăсем тĕпрен илсен вĕçленĕ

Дон фронтĕнчи войскăсем, нимĕçсен СТАЛИНГРАД районĕнче хупăрласа илнĕ фашистла войскисене хирĕç малалла наступлени туса пырса, хаяр çапăçусем хыççăн противникăн питех те нумай тата хăватлă укреплениййĕсене çĕмĕрсе тăкса, хупăрласа илнĕ группировкăна пĕтерсе тăкас ĕçе тĕпрен илсен вĕçленĕ.

Малтан пичетлесе кăларнисемсĕр пуçне, январĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çити пынă çапăçусенче пирĕн войскăсем оборонăн питех те кирлĕ тĕреклетнĕ çак узелĕсене йышăнса илнĕ: ПЕСЧАНКА, КУПОРОСНОЕ, «ГОРНАЯ ПОЛЯНА» совхоз, БОЛЬШАЯ РОССОШКА, ГОНЧАРКА ятлă хутор, ПОДСОБНАЙ ХУÇАЛĂХ, ОРЛОВКА, ГОРОДИЩЕ, КУЗЬМИЧИ, «ОПЫТНОЕ ПОЛЕ» совхоз, БОРОДКИН ятлă хутор, ШИШЛЯНКИН, НОВАЯ НАДЕЖДА, УВАРОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, КАМЕННЫЙ БУЕРАК, СТАЛИНГРАДСКИЙ, ОПЫТНАЯ СТАНЦИЯ, СТУДЕНАЯ ЯБЛОНОВКА, АЛЕКСЕЕВКА, ВЕРХНЯЯ ЕЛЬШАНКА, НИЖНЯЯ ЕЛЬШАНКА, СТАРО-ДУБОВКА, ЗЕЛЕНАЯ ПОЛЯНА, ПОЛХЯКОВКА, ЛЕСОПОСАДОЧНАЯ, КУЛЬТСТАН та та çак чугунçул станцисемпе разъезчĕсем: ВОРОПОНОВО, ЕЛЬШАНКА, ДРЕВНИЙ ВАЛ, КОННЫЙ, РУЗГУЛЯЕВКА, ГУМРАК, САДОВАЯ.

Кунсăр пуçне, çак вăхăт хушшинчех пирĕн артиллерийски, минометнăй тата сапернăй чăссем тĕреклетнĕ 620 узелпа блиндажа, лайăх çирĕплетсе тунă 40 наблюдательнăй пункта аркатса тăкнă, противникăн артиллерипе миномечĕсен 220 батарейине пĕтерсе тăкнă е пусарса лартнă.

Противникран 835 квадратлă километр чухлĕ территорие тасатнă.

Нимĕçсен Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ фашистла войскисене хирĕç генеральнăй атака тума пуçланăранпа, январĕн 16-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче, пирĕн войскăсем пĕтĕмпе халăх пурăнакан 80 пункта, нимĕçсем вăйлăн тĕреклетсе оборона узелĕсем туса хунăскерсене, 9 чугунçул станцине тытса илнĕ, 2.146 дзотпа блиндажа, вăйлăн çирĕплетсе тунă 115 наблюдательнăй пункта аркатса тăкнă, противник артиллерийĕпе миномечĕсен 537 батарейине пĕтерсе тăкнă е пусарса лартнă.

Противникран 1.400 квадратлă километр чухлĕ территорие тасатнă.

Сталинград—Поворино, Сталинград—Тацинская, Сталинград—Сальск чугунçулĕсене тăрăшĕпе çӳремелле туса ирĕке кăларнă.

Противникăн хупăрласа илнĕ войскисене хирĕç генеральнăй атака тунă вăхăтра пирĕн войскăсем нимĕçсен 28.000 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, 40.000 ытла салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

Халĕ противникăн пĕр-пĕринчен уйрăм тăракан ИКĔ пысăк мар группи пĕтерсе тăкмасăр юлнă, вĕсен пĕтĕм хисепĕ 12.000 çынран та ытла мар, вĕсенчен пĕр группи Сталинградран çурçĕртерехре тата теприн Сталинградăн вăтаçĕрне çывăхра тăраççĕ. Çак икĕ группин те кунсулĕ пĕтсе çитнĕ, вĕсене пĕтерсе тăкасси—ИКĔ-ВИÇĔ куна çеç пыма пултарать.

Çак вăхăт хушшинчех, малтанлăха палăртнă тăрăх, пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем—523, танксем—1297, тĕрлĕ калибрлă орудисем—2.978, минометсем—904, пулеметсем—4870, винтовкăсем—45.000, автомашинăсем—49.000, мотоциклсем—4660, тягачсемпе транспортсем—229, çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем—4570, радиостанцисем—170, бронепоездсем—3, паровозсем—42, вагонсем—230, боеприпассемпе хĕçпăшал алсен склачĕсем—160 тата ытти çар пурлăхĕсем нумай.

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем—132, танксем—290, тĕрлĕ калибрлă орудисем—315, пулеметсем—950, автомашинăсем—1970, тĕрлĕ складсем—43.

Çапла вара, нимĕçсен суйласа илнĕ фашистла войскисен пысăк группировкине хупăрласа илсе пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çарăн Верховнăй Главнокомандованийĕ тунă плана тĕпрен илсен пурнăçа кĕртнĕ.

Ку чухнехи вăрçă техникипе вĕçне çитиех хĕçпăшалланнă регулярнăй войскăсен çавтери пысăк ушкăнне хупăрласа илсе пĕтерсе тăкнин çакăн пек примерне вăрçăсен историйĕ халиччен пĕлмен-ха.

Нимĕçсен Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ фашистла войскисене пĕтерсе тăкас ĕçе генерал-полковник К. К. РОКОССОВСКИЙ юлташ тата унăн штаб начальникĕ генерал-лейтенант М. С. МАЛИНИН юлташ ертсе пыракан Дон фрончĕн вăйĕсем пурнăçа кĕртнĕ. Артиллери наступленине Верховнăй Главнокомандовани Ставкин представителĕ Артиллери Маршалĕ Н. Н. ВОРОНОВ юлташ ертсе пынă, авиаци ĕçĕсене вара авиацин генерал-полковникĕ А. А. НОВИКОВ юлташ тата авиацин генерал-лейтенанчĕ А. Е. ГОЛОВАНОВ юлташ ертсе пынă.

Çапăçусенче генерал-лейтенант И. М. ЧИСТЯКОВ юлташăн, генерал-лейтенант П. Е. БАТОВ юлташăн, генерал-лейтенант М. С. ШУМИЛОВ юлташăн, генерал-майор И. В. ГАЛАНИН юлташăн, генерал-лейтенант В. И. ЧУЙКОВ юлташăн, генерал-майор А. С. ЖАДОВ юлташăн войскисем тата авиаци генерал-майорĕн С. И. РУДЕНКО юлташăн авиачаçĕсем уйрăмах палăрнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### Январĕн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 25-мĕшĕнче Воронеж фронтĕнчи войскăсем Воронеж районĕнче наступлени пуçласа ярса нимĕçсен чаçĕсене сирсе янă та Воронеж хулине пĕтĕмпех йышăнса илнĕ.

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем Лозно-Александровка ятлă район центрне тата халăх пурăнакан ытти темиçе пункта тытса илнĕ.

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн войскăсем Красный Маныч, Журавлевка, Благодатная ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем Белая Глина ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тата Кармалиновская, Фельдмаршальский, Привольный, Ново-Кубанское ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем тăшманăн миноносецне путарнă.

* * *

Январĕн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци тăшманăн портĕнче нимĕçсен 10.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă, фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче артиллерин 6 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, 2 поезда çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин боецĕсем, нимĕçсен оборонăллă йышлă сооруженийĕсене çĕнтерсе, халăх пурăнакан пысăк пунктăн урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаяр çапăçура тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн чăссем тăшманăн танкĕсемпе пехотин контратакисене сире-сире янă. Çав çапăçусенче нимĕç пехотин 2 батальонне аркатса тăкнă, тăшманăн 9 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнче совет войскисем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра пирĕн чăссем тăшманăн мотопехотипе танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕçсен пур контратакисене те сирсе янă, хăйсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Старобельск хулине штурмланă вăхăтра 1.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чăссем хулара 15 танк, 16 бронемашина, 150 оруди, 200 автомашина ытла, 8 пысăк склад, 8 паровоз, вагонсем нумай тата ытти тĕрлĕ трофейăсем те тытса илнĕ. Тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем Воронеж хулине пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ.

Воронеж фронтĕнчи ытти участоксенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ операцисем туса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем малалла кайса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пысăк пунктра тăшманăн гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ. 200 автомашина, 300 лаша тата боеприпассемпе апат-çимĕç склачĕсене тытса илнĕ. Тепĕр участокра совет чаçĕсем тăшманăн хирĕç тăмалли паха узелне тытса илнĕ. 3 танк, 28 оруди тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Кавказ лешьенчи фронтăн войскисем çапăçса пырса малалла кайнă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски часть нимĕçсен противотанковăй дивизионне аркатса тăкнă. 20 противотанковăй орудине персе çĕмĕрнĕ, 7-шне тытса илнĕ. 80 çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра Беляев юлташ ертсе пыракан боецсем противник йышăннă халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайнă та нимĕç батальонĕн штабне аркатса тăкнă. Трофейăсем тата паха документсем тытса илнĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче пĕр паровоз тата боеприпассем тиенĕ 10 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Вара пĕр талăк хушши поездсем çӳреме пултарайман. Нимĕçсем чугунçула юсанă та чугунçул хуралне вăйлатнă. Темиçе кун иртсен совет патриочĕсем çав участокрах тăшманăн горючи турттарса пыракан эшелонне крушени тунă. Пĕр паровоз тата 8 цистерна çĕмĕрĕлнĕ. Çав участокра вара поездсем каллех çӳреме чарăннă.

* * *

Сталинград районĕнче çапăçу хирĕнче нимĕçсен 305-мĕш дивизийĕнчи 578-мĕш полкăн 10-мĕш ротинчи ефрейторăн записной кĕнекине тупнă. Аяларахра çав записной кĕнекерен хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр: «...шоссе çулĕ çинче тăратпăр, малашне мĕн тумаллине пĕлместпĕр. Эпĕ ытла та выçă, ниçта та пĕр кашăк шӳрпе те илме çук. Пĕр яла çитрĕм. Кунта мĕнпурĕ пĕтĕмпе арпашса кайнă. Хамăн ротăна аран-аран тупрăм. Картара çĕр каçрăм. Питĕ хытă шăнтăм. Манăн мĕнпур пурлăха вăрларĕç... Каллех тепĕр çĕре каймалла, каллех ĕнтĕ апатсăр, нумай утнă хыççăн каçпала Сталинграда çитрĕмĕр. Нӳхрепе лекме май килчĕ. Кунта 30 çын. Тискер ушкăн. Пурин те нервăсем хавшаса çитнĕ. Апат пирки тăтăшах пĕр-пĕринпе вăрçаççĕ, çапăçаççĕ. Выçлăх акă мĕн тума пултарать иккен! Пирĕнпе пĕрле аманнисем тата вар чирĕпе чирлисем пур. Вĕсем вилеççĕ ĕнтĕ. Вĕсен ахаль те сахал, выçă паекне сывă салтаксем туртса илеççĕ, çăвартан та кăларса илеççĕ... Манăн пурăнас килет. Кирек мĕн пулсан та пурăнасчĕ. Пурте çăва тĕпне кайса çухалтăр, анчах манăн çăлăнса юласчĕ. Шăтăкра пĕр салтакпа пĕрле ларатăп. Вăл Австрирен килнĕ 20 çулхи ача. Эпир иксĕмĕр те пĕр сăмах та чĕнместпĕр. Мĕн çинчен калаçасха вара? Мана питĕ сивĕ. Аманнисем йынăшни илтĕнет. Вĕсем юр çинче, кĕртсенче выртаççĕ. Вĕсене пуçтармаççĕ, илсе каймаççĕ... Çак хăрушă тамăкран тыткăна парăнмасăр çăлăнса тухма пуррине пĕлместĕп эпĕ».

### Январĕн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем Сталинград, Воронеж районĕсенче, Çурçĕр Кавказра, Анатри Донпа Çурçĕр Донец районĕнче тата Ладога кӳллинчен кăнтăртарахра малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче пирĕн чăссем тăшманпа хаяррăн çапăçнă хыççăн халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. 8 оруди, 19 пулемет, ултă кĕпçеллĕ 3 миномет, 280 винтовка, 31 автомат, 12 автомашина, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшманăн танкĕсемпе пехотин контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли ытла тата нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ 3 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр-хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски часть гитлеровецсенчен «Красноармеец» совхоза тасатнă. Çапăçура 15 миномет, 10 пулемет, 100 винтовка ытла, апат-çимĕç склачĕпе боеприпассен складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чăссем темиçе паха высотана тытса илнĕ. Гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăнă, вĕсем темиçе хут та контратака тунă. Çав контратакăсене пурне те сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ.

* * *

Воронеж фронтĕнчи войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пирĕн танкистсем тăшманăн парăнма килĕшмен войскисен группине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пункта, нимĕçсем вăйлă тĕреклетнĕскере, штурмласа тытса илнĕ. 18 дзотпа 9 блиндажа ишĕлтернĕ. Халăх пурăнакан пункт патĕнче тата унăн урамĕсенче тăшманăн 300 виллине çити выртса юлнă. 3 танк, 7 оруди тата 2 апат-çимĕç складне тытса илнĕ.

* * *

Кавказ лешьенчи фронтăн войскисем малалла тапăнса пынă. Н-ски чаçăн гвардеец-кавалерисчĕсем тăшманăн колоннине сасартăк тапăннă та унăн пехотин 2 ротине касса ваклаанă. Пирĕн соединени малалла куçса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. 130 çынна тыткăна илнĕ. Йышлă трофейăсем тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктра кăна 14 оруди, 52 автомашина, 7 транспортер, 5 тягач, боеприпассен складне тата запаслă чăссен складне тытса илнĕ.

* * *

Ростов облаçĕнчи партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçса тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансем 24 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 6 лава, ултă кĕпçеллĕ миномета, противотанковăй орудие пĕтерсе тăкнă тата 25 тонна горючи çунтарса янă. 2 пулемет, 100 винтовка ытла тата 25.000 патрон тытса илнĕ. Кунсăр пуçне, совет патриочĕсем нимĕçсенчен 1.200 пуç măйракаллă выльăх тата 3.500 пуç сурăх туртса илнĕ, çав выльăхчĕрлĕхе гитлеровецсем колхозсенчен тата халăхран çаратса илнĕ пулнă.

* * *

Аяларахра Сталинград облаçĕнчи Нижне-Калиновка хуторĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем çаратни тата тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Гитлеровецсем колхозниксенчен мĕнпур апат-çимĕçе тата колхозниксен хăйсен япалисене туртса илнĕ. Елизавета Комарова колхозницăран унăн ĕнине, 2 качакине, 10 чăххине тата 2 михĕ тыррине туртса илнĕ. Петр Симонов колхозникран тата Федосия Буриковăпа Мария Огурцова колхозницăсенчен нимĕçсем вĕсен ĕнисене тата пăрушĕсене туртса илнĕ. Гитлерла бандитсем çуртсене кĕрсе кайса, ăшă япаласемпе хаклă япаласене вăйпа турта-турта илнĕ. Нимĕçсем Марфа Пономаревăпа Пелагея Фарсовăн пĕтĕм пурлăхне пăхса тухнă та пĕр чемодан кĕпе-йĕм, çĕлекен машина, кĕсьене чиксе çӳрекен сехет тата ылттăн çĕрĕ илсе кайнă. Кĕркунне нимĕçсем колхозниксене хăйсен çурчĕсенчен хăваласа кăларнă та хăйсем çав çуртсенче пурăнма тытăннă. Хăйсем тарас умĕн нимĕçсем ялсовечĕн çуртне, колхоз правленийĕн çуртне, шкула, колхозăн 4 кĕлетне, витине, колхозниксен 20 çуртне тата ытти çурт-хуралтăсене çунтарса янă. Эпир тăватă уйăх хушши фашистла ирĕксĕрлĕхре пурăнтăмăр. Çав вăхăт хушшинче эпир яланах хамăра вĕлермелле тунă çынсем пек туйса тăтăмăр. Эпир хамăра ирĕке кăларакана — Хĕрлĕ Çара хĕвеле кĕтнĕ пекех кĕтсе тăтăмăр. Юлашкинчен эпир кĕтнĕ кун çитрĕ. Хĕрлĕ Çар фашистла вăрă-хурахсене пирĕн асапсемшĕн тивĕçлипе тавăрĕ». Акта П. Полякова, П. Симонов, А. Сачникова, З. Максимова, М. Недомеркова, В. Водолазова, А. Сысоева, А. Котельникова, А. Зорина, М. Гусева, М. Борисова, А. Гужева тата ытти колхозниксемпе колхозницăсем те алă пуснă.

* * *

Антверпенра Бельги патриочĕсем нимĕçсен гаражне темиçе бомба пăрахнă. Пушарта 20 автомашина ытла пĕтнĕ. Мехельн районĕнче нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Туллимар даннăйсем тăрăх, Бельги железнодорожникĕсем юлашки уйăх хушшинче 63 паровоза стройран кăларнă.

## Танксемпе самолетсем тума

КАНАШ. Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 60.000 тенкĕ укçа пухрĕç. Колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсем Игнатьев, Яранском, Ильин юлташсем пиншер тенкĕ пачĕç.

— Эпир хамăр вăйпа тунă танксемпе самолетсем,—тет ватă колхозник Н. Данилов юлташ, — гитлерла çарсене аркатса тăкнă çĕрте пысăк вырăн йышăнĕç. Чăваш колхозникĕсен ячĕпе тăракан танксем тăшмана татах та вăйлăнрах пырса çапма пирĕн мухтавлă воинсене çĕнĕ вăй хушса парĕç. Пирĕн чаплă ĕç историре юлĕ. Пирĕн чăваш халăхĕ те Октябрьте çĕнсе илнĕ ирĕклĕхе, пуянлăха сыхласа хăварнă çĕрте вырăс халăхĕпе алла-аллăн тытăнса вăйлăн çапăçнине кăтартса парĕ. Эпĕ ватă пулсан та танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.000 тенкĕ, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 10.000 тенкĕ паратăп.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем Чкаловски районри «РОКК» колхоз çамрăкĕсен патриотизмлă паха пуçарăвне йышăнса боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума 30.000 тенкĕ ытла пухнă. Колхоз председателĕ К. Яранском 10.000 тенкĕ, ватă колхозник Н. Данилов 10.000 тенкĕ панă. Укçа пухас ĕç пур бригадăсенче те ăнăçлăн сарăлса пырать.

Т. ТУРХАН.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. Амачкинăри «Красная звезда» колхоз çамрăкĕсем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 25.000 тенкĕ хывнă. «Красная Армия» колхозри комсомолецсем те 35.000 тенкĕ хыврĕç. Колхоз председателĕ Анкудинов юлташ 2.000 тенкĕ, колхозниксем: Н. Верхолетов, Нефедов, Самойлов юлташсем 500-шер тенкĕ пачĕç.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

## Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли парнесем хатĕрлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 25-мĕшĕ (Хамăр корр.) Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна паллă тăвас тесе, районри колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем боецсем патне паха парнесем яма пуçларĕç. „Красный Атмал“ колхоз членĕсем фронтри боецсем патне 5 килограмм пыл, 11 килограмм типĕтнĕ аш-какай, 24 килограмм кĕрпе яраççĕ. „Искра“ колхозри колхозниксем боецсем патне 60 килограмм аш-какай, 40 килограмм махорка, 300 килограмм çĕрулми, 100 килограмм купăста тата 15 килограмм сухан яма хатĕрленеççĕ.

Районри мехлесопунктра ĕçлекен рабочисемпе служащисем уяв ячĕпе боецсем патне 40 посылка яраççĕ. Вал посылкăсене пухса хатĕрлеме халь 2.000 тенкĕ ытла пухнă.

Х. Лисин.

## 1943 çулшăн 350 центнер аш-какай панă

КАЛИНИНО. Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, районри колхозсемпе колхозниксем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне районри ĕççыннисем 1943 çулшăн 350 центнер аш-какай панă. Айкăшри Киров ячĕпе тăракан, Мачамăшри «Первое мая», Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозсем 18—19-шер центнер аш-какай пачĕç.

Б. ШОРНИКОВ.

## Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри чылай шкулсем тимĕр-тăмăр пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Сăмахран, Шуркасси вăтам шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисем 300 килограмм, Шуршăлти туллимар вăтам шкулти ачасем 255 килограмм, Упакассинчи туллимар вăтам шкулти ачасем 200 килограмм тимĕр-тăмăр пухса пачĕç. Шуршăлти туллимар вăтам шкулти 6-мĕш класри А. Колесников 70 килограмм, Н. Терентьев—20 килограмм, Н. Александрова 10 килограмм пухса государствăна леççе пачĕç.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

## Бригадăсем ăмăртса ĕçлеççĕ

ВАРНАР. «Заря» колхозра кашни колхозник халь ĕçре. Вĕсем çывăхарса килекен çуракине кĕске срокра тата агротехника кăтартса панă пек иртерме хатĕрленеççĕ.

Колхоз иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене аван вĕçлерĕ, государствăна нумай тырă, пахча-çимĕç туса пачĕ, планран иртерсе оборона фондне чылай тырă хыврĕ.

Колхоз çуркунне акмалли вăрлăхсене сортласа çитерĕ. Вăрлăх сортлама ятарласа звено организациленĕ. Çав звено кулленхи ĕç нормине тăтăшах икшер хут тултарса ĕçлерĕ. Çавăн пекех ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те ăнăçлăн пулса пырать: 12 плуг, 2 сеялка, 8 сӳре юсанă та ĕнтĕ, лаша кӳлмелли хатĕрсене те юсама тытăннă. Çуракине хăвăртрах тата тĕплĕн хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе колхозри бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Колхозниксем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна çуракине пуренĕпе те хатĕрленсе çитнипе паллă тăвасшăн. Талăкра тунă ĕçсене çийĕнчех пăхса тухса ăмăрту обязательствисем пурнăçланса пынине паллă тăваççĕ.

С. ПУДАКОВ.

## Ялхуçалăх машинисем ĕçе хатĕр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. „Янмурзино“ колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх машинисене пурне те çирĕп юсаса лартнă. Вăрлăхсене тасатса сортланă хыççăн лабораторинче тĕрĕслеттернĕ. Вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ лайăх.

Çак иртнĕ кунсенче колхозниксем 215 гектар çинче юр тытса хăварчĕç, уя 500 лав ытла тислĕк кăларнă, 76 центнер кĕл, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Колхоз правленийĕ колхозниксене хĕллехи вĕренĕвне организациленĕ. Звеноводсем, уйрăм культурăсемпе ĕçлекен звеносенчи колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ. Занятисене колхоз председателĕ Ефремов юлташ хăй ертсе пырать.

И. Хатаевский.

## Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри çыхăну работникĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Совнарком декабрь уйăхĕнчи ăмăртура Етĕрнери çыхăну конторине (начальникĕ Кудряшов, райкомпредседателĕ Алексеева). Совнарком çавăн пекех тата дамала тухнă тесе палăртнă, ăна хăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата укçан премии памă йышăннă.

Совнарком декабрь уйăхĕнче Пăрачкаврипе Чкаловскинчи çыхăну конторисем лайăх ĕçленине палăртнă. Совнарком декабрь уйăхĕнче Çĕмĕрлерипе Канашри конторăсем начар ĕçленине палăртнă.

Совнарком республикăри çыхăну Управленийĕн начальникне Воронин юлташа çыхăну ĕçне лайăхлатма хушнă.

# Пуян тырпулăн никĕсне хываççĕ

Комсомольски районри Буденный ячĕпе тăракан колхоз çулран çул пысăкрах та пысăкрах тырпул туса илет. Агротехника кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçласан, уйхире çулсерен нумай тислĕк тăксан, нумай юр тытса хăварсан тырпулăн тухăçлăхĕ ӳссе пырать. 1941 çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 80—90 пăт тĕштырă пухса илнĕ, иртнĕ 1942 çулта тырпул тухăçлăхĕ 100—120 пăт пулчĕ, уйрăм участоксенчен 150-шар пăт тырă туса илнĕ.

Паллах, пуян тырпул хăй тĕллĕн пулмасть. Унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн, тырпула лайăх пăхса ӳстерсе пĕр тăкăксăр пуçтара кĕртессишĕн колхозниксем иртнĕ çул ырми канми ĕçлерĕç. 65 çулти колхозниксем çамрăк çынсемпе тан ĕçлерĕç. Колхозница Мария Чернова 1942 ялхуçалăх çулĕнче 700 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă, колхозник Яков Поликарпов 500 ĕçкунĕ, 60 çултан иртнĕ ватă колхозниксем Самуил Трофимов, Антон Поликарпов тата ыттисем те 400-шер ĕçкунĕ ĕçлесе турĕç. Подростоксем те нихăçан пулман хастарлăхпа ĕçлерĕç. 15 çулти подросток Василий Михайлов уйхир ĕçĕнче кăна кăçал 225 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ, вăл кăçал пурĕ 350 ĕçкунĕ тунă.

Бригадăсемпе звеносем хушшинче социализмлă ăмăрту куллен вăйланса пычĕ. Кашни колхозникпа колхозница пĕр-перинпе ăмăртса нумайрах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшрĕç.

Кăçал колхоз тырпул тухăçлăхне ӳстермелли пур мероприятисене те тĕплĕн туса пырать. Колхозниксем хăйсем умне 1943 ялхуçалăх çулĕнче вăтам шутпа кашни гектартан 150—160 пăт тырă туса илес задача лартнă. Çавăншăн халь кĕрешӳ хĕрӳллĕн пырать. Тислĕк, торф кăларнă çĕрте кашни бригадăран кулленех 2-шер лаша ĕçлет. Вăл лашасене урăх ĕçе уйăрмаççĕ. Куллен 15—20-шер лав тислĕк уйри хранилищĕсене тухать.

Тислĕк турттарнă çĕрте уйрăмах шкулта вĕренекен ачасем пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Гурий Григорьев, Иван Никитин тата ытти ачасем те шкултан тухсанах колхоза тислĕк кăларма пыраççĕ. Колхоз халь уя 600 лав тислĕк кăларнă. Тислĕк кăларас тĕлĕшпе халь ăмăртура 1-мĕш бригада мала тухрĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшри ытти ĕçсемпе виççĕмĕш бригада малта пырать.

**Н. ВИНОГРАДОВ.**

# Çуракине хатĕрленетпĕр

ЕЛЧĔК. Пирĕн Тăрмăш ялсоветĕнче виçĕ колхоз: «Çĕнĕ çул», «Ялав» тата «Хĕрлĕ ялав» колхозсем. 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕнче те ку колхозсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлерĕç. Тырпулсене çĕнĕ çулччен çапса пуçтарчĕç, государствăна тырă тата аш-какайпа сĕтпе те пĕтĕмпех парса татрĕç. «Çĕнĕ çул» колхоз государствăна 1943 çулшăн та 18 центнер аш-какай пачĕ.

Кăçал колхозсене социализмлă ăмăрту татах та вăйланчĕ. Колхозниксем 1943 çулта тата ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Колхоз руководителĕсем — коммунистсем Андрианов, Алексеев, Варламов юлташсем хăйсен ĕçне пысăк ответлăхпа туса пыраççĕ. «Çĕнĕ çул» колхоз çуракинче акмалли вăрлăхлăх тырăсене пурне те çителĕклĕ таран уйăрса хунă тата вĕсене пурне те сортланă. Халĕ ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, уя 450 лав тислĕк кăларнă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухаççĕ. Колхозниксем бригадăн-бригадăн пуçтарăнса агротехникăна вĕренеççĕ.

«Хĕрлĕ ялав» колхозра та çуракине акма вăрлăхсем хатĕр. Вăрлăхсен шăтас лайăхлăхне тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсен шăтас лайăхлăхĕ 94 процент, тулăн — 96 процент. Колхоз тимĕрçи 15 плуг юсанă, сĕрессене сеялкăсене юсаса пĕтернĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа колхоз уя 600 лав тислĕк кăларнă.

**П. ЩЕРБАКОВ,**
**Тăрмăш ялсовет исполкомĕн председателĕ.**

## Вырăс Улхаш ялсоветĕнчи ĕçĕнче улшăну тумалла

ÇĔМĔРЛЕ, январĕн 26-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Вырăс Улхаш ялсоветĕн председателĕ Казаков юлташ вырăнти удобренисене пухса уя кăлармалли уйăхлăха малтанхи кунĕсенче «колхозсене çавăн пек ĕç пĕлместĕп, илтмен» тесе лартрĕ. Республикăри колхозсенче вырăнти удобренисене пухса хатĕрлемелли уйăхлăх пуçланнинчен вунă кун иртрĕ. Анчах ĕçре нимĕнле улшăну та çук. Вырăс Улхаш ялсоветĕнчи колхозсем халĕ те вырăнти удобренисене пухма тытăнман. Ялсоветĕнчи колхозсем ĕçĕ те уя тислĕк кăларас тата ытти удобренисене пухса хатĕрлес тĕлĕшпе графика тултарса пымаççĕ.

„Лесной огонек" колхоз январь уйăхĕнче уя 1.000 тонна тислĕк, 350 тонна торф кăлармалла тата 150 центнер кĕл, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелле. Çак ĕçе вăхăтра туса пыма колхозăн пур майсем те пур. Выльăх-чĕрлĕх витисенче тислĕк купаланса выртать, лашасем те, çынсем те ĕçрен пушă тăраççĕ. Анчах ĕçе организацилекенни çук. Колхоз правленийĕ çĕре çемçетес ыйтупа интересленмест, тырпул хăй тĕллĕнех тухăçлă пулассине шанса лараççĕ кунти руководительсем. Колхоз уйăхлăха паянхи куна çитсе те пачах хутшăнман, январь уйăхĕнче уя пĕр лав та тислĕк кăларман.

Калас пулать, „Лесной огонек" колхозра ĕç дисциплини питех те япăхланса кайнă. Çавăнпа кунта халĕ те авăн çапса пĕтермен-ха. Авăн çапас ĕçе куллен 100 колхозник тухма пултарать, анчах ĕçе 20—25 çын çеç тухаççĕ, вĕсем те талăкра 4—5 сехет çеç ĕçлеççĕ. Хăш-пĕр кунсенче нимĕн те тумаççĕ.

Ялсовет исполкомĕн председателĕ Казаков юлташ çакăн пек ситменлĕх çинчен пĕлмест мар, пĕлет, анчах нимĕн те тумасть. Вăл колхозсен ĕçĕпе интересленмест, унта кайса пăхмасть, кунран-кун вăхăта ялсоветĕнче ларса çеç ирттерет. Халь тумасан, вырăнти удобренисене хатĕрлес ĕçе хăçан тăвас теççĕ-ха кунти ялсоветăн тата колхозсен руководителĕсем? ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене Вырăс Улхаш ялсоветĕн руководителĕ Казаков юлташ мĕншĕн пурнăçа кĕртсе пыма тăрăшмасть?

Çĕмĕрле районĕнчи чылай колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе халĕ те кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Çакăнтан райçĕрĕç пайĕн заведующийĕн хăйпе валли çирĕп вывод тумалла.

## Уйăхсен графикне пурнăçлатпăр

КУКЕÇ, январĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Район колхозсем паянхи куна уя 19.653 тонна тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес тĕлĕшпе ирттерекен уйăхлăх графикне пурнăçлатпăр. Уйрăмах минераллă удобренисем турттарса хатĕрлес ĕç лайăх пырать. Январь уйăхĕнче пирĕн районри колхозсем пурĕ 50 тонна минераллă удобрени турттармалла пулсан, 56 тонна турттарнă. «Молния» колхоз 5 тонна, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 20 тонна турттарса хатĕрленĕ.

Çавăн пекех уйăхлăхăн 25 кунĕ хушшинче 630 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 1.010 центнер кĕл пухнă. Анчах та нумай колхозсен уйхире торф кăларас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Январь уйăхĕнче кăларма палăртнă торфа халех уя кăлармалла.

**Л. ДАНИЛОВ,**
**Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.**

*Пирĕн земляксем*

# Лейтенант Петрухов

Лейтенант Андрей Семенович Петрухов Шăмăршă районĕнчи Карабай Шăмăршă ялĕнче 1918 çулта çуралнă. Хĕрлĕ Çара кайиччен вăл Патăрьелĕнчи иккĕмĕш колхоз театрĕнче артист пулса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çара кайсан отечественнăй аслă вăрçă пуçланаччен Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пулнă.

1941 çулти кĕркунне Петрухов юлташ Хĕвеланăç фронтне куçнă. Вал унта çапăçăва кĕнĕ. Çапăçусен вутĕнче хĕрсе çирĕпленнĕ.

Нимĕçсем Мускав çине тапăнса килнĕ чух вăл хăйĕн танкĕпе тăшманăн 4 танкне хирĕç тăрса çапăçнă. Çур сехет ытла тăсăлнă хĕрӳллĕ тытăçу хыççăн нимĕçсен 3 танкĕ стройран тухнă, тăваттăмĕш ирĕксĕрех парăнма лекнĕ. Анчах çак çапăçура Петрухов юлташ 3 тĕлтен çăмăллăн аманнă. Кĕске вăхăт хушши хирти лазаретра выртнă хыççăн унăн каллех çапăçăва кĕмелле пулнă. Ку çапăçура Петрухов лейтенант хăйĕн танкĕпе тăшман тылне 12 километра яхăн кĕрсе кайма пултарнă. Вăл пĕр пункт çывăхне чарăнса танкне пытарнă та, фронтăн малти линийĕпе пĕрлешме васкакан фашистсен 150—200 çынлă ушкăнне пулеметран персе салатса янă. Тăшманăн тылĕнче 2 кун пурăнма лекнĕ. Виççĕмĕш кунне пирĕн пехота, танксем пулăшса пынипе, тăшманăн малти линине çĕмĕрсе кĕнĕ те наступление куçнă. Кунпа хавхаланса Петрухов та хăйĕн танкĕпе çапăçăва кĕнĕ, анчах тăшманăн çывăхри батарейи, ăна асăрхаса, вĕçĕмсĕр пеме тытăннă. Танкăн гусеницине татнă, машинăна пысăк сиен кӳнĕ. Танкпа текех çапăçма май çуккине туйса, Петрухов тăшман çине штык вĕççĕн кĕрсе кайнă. Çапла вăл нимĕçсен 3 салтакне чиксе пăрахнă. Анчах йывăç çинче юлнă автоматчик, ик-виç черет персе, ăна 5 çĕртен амантнă. Петрухов юлташ та тăшмана тивĕçлипе тавăрнă: автоматчика çавăнтах персе ӳкернĕ. Çак вăхăта унăн вăйĕ пĕтсе çитнĕ, ăна госпитале илсе кайнă.

Петрухов юлташ пурĕ 15—20 атакăра пулса 17 çĕртен аманнă. Çавăншăн çар совечĕ ăна «Красная Звезда» орденĕ, «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Нумай пулмасть лейтенант Петрухов юлташ хăйĕн тăван ялне—Карабай Шăмăршăна килсе кайрĕ.

**М. ВАСАН.**

*Фронтовиксен çырăвĕсем*

# Тăшмана авалхи вырăс хулинчен сирпĕтсе кăларнă

Великие Луки хулине татăклăн штурмланă хыççăн пирĕн Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă чаçĕсем тăшманăн çак хулари пысăк гарнизонне пĕтерсе тăкрĕç. Хулара фашистла çĕлен-калтасен виллисем кăна выртаççĕ. Вĕсене пуçтарса çĕр айне чикмен-ха.

Çак хулана илни унта пурăнакан совет çыннисене кăна мар, инçетри тылра пурăнакансене те савăнтарать. Вăл чугунçулăн пысăк узелĕ, вырăс халăхĕн, Российăн, Совет Союзĕн тахçанхи пысăк хули. Çак хулашăн пынă хаяр та хĕрӳллĕ çапăçура чăваш халăхĕн ывăлĕсем те мухтавлăн çапăçрĕç.

Чиркӳ подвалĕнче хулари ĕçсыннисем вырнаçнă. Такам, паллă мар çын килкартине самовар илсе тухса лартнă. Вăл хура тĕтĕм кăларса ларать. Ватă карчăк самовар тавра савăнса çӳрет, вăл уççăн сывлани, савăнни, хĕпĕртени вăл утнинчен, калаçнинчен курăнать. Карчăк боецсене вĕри чей ĕçме сĕнет. — Эсир пире ирĕке кăларакансем вĕт, — тет вăл старши сержанта Сергеев юлташа. — Эпир сире мĕн пек кĕтнĕ.

Çамрăк сăнлă кĕçĕн командир, аллине сулса хăйĕн боецĕсене кăтартать: — Асанне, ак çаксем нимĕçсене турарĕç, вĕсене сывлăх сун.

Вăрçăччен колхоз счетоводĕ пулнă çак Сергеев юлташ ертсе пынипе красноармеецсен пысăк мар ушкăнĕ хулан пĕр кварталне туртса илме пултарчĕ.

Нимĕçсем хулара тытăнса юлас тесе тем пекех тăрăшнă. Пирĕн штурмовой отрядсем фашистла çăхансен йăвисене çĕмĕрме тытăниччен нумаях та пулмасть маларах нимĕç офицерĕсем хулари çынсене: — Вырăс çак хулара нихăçан та пулмасть. Çапла каланă фюрер, — тесе суйнă.

Мухтанчăксем! Халĕ вĕсене пурне те пĕтерсе тăкнă, вĕсем текех Великие Луки хулинче çук ĕнтĕ!

Пирĕн артиллеристсем тăшмана блиндажсенчен, траншейăсенчен, дзотсенчен вутпа-хĕмпе, хурçăпа хĕссе кăларчĕç. Подвалсене кĕрсе ларнă фашистсене пĕтерсе тăкасси çăмăл мар. Ф. Васильев отделенинчи боецсем подвала кĕрсе ларнă тăшмана пĕтерме пӳрт урайне ломпа шăтарчĕç те унта гранатăсем ывăтрĕç. Пĕр нимĕç те чĕрĕ юлман!

Пулеметчиксем те пархатарлă ĕçлерĕç. Чăваш ачи, Чкаловски районри Капитонов юлташ хăйне суранласан та темиçе минута хушши фашистла йытăсене çĕмĕрсе, пĕтерсе пычĕ.

Почта, госбанк, поликлиника çурчĕсем т. ыт. те — çак хулара нимĕçсем нумай пурăнма ĕмĕтленнине кăтартса параççĕ. Пысăк çуртсенчи пӳлĕмсене нимĕç малярĕсем сăрланă. Картинăсем нимĕç салтакĕсем тунă «çĕнтерӳсене» кăтартса параççĕ. Шурă стена çинче хресчен çуртне вут чĕртсе çунтарнă чухне савăнса тăракан нимĕç салтакне кăтарнă. Совет снарячĕ çурт стенине çĕмĕрнĕ. Пӳртре, урайĕнче нимĕç салтакĕсен виллисем выртаççĕ. Вĕсем пур çĕрте те ытлин-çитлĕнех выртаççĕ. Хула урамĕсенчен пĕринче нимĕçсен штаб машини йывăç çурт çумне пырса çапăннă. Вилĕмрен тарма хăтланнă курăнать шоферпа 4 офицер, анчах пирĕн Совет воинĕсен пульисем вĕсене хăваласа çитнĕ.

**Капитан Р. ШАШКОВ.**
**Действующи Арми.**

# Ют çĕршывсенче

ТУНИСРА. **Укерчĕк çинче:** Ан гличансен противотанковăй орудийĕсем фронтăн малти линийĕ патне лле куçаççĕ. (Укерчĕке Лондонран радиопа панă).

## ШВЕЦИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ГАНСОН ТУХСА КАЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин премьер-министрĕ Гансон риксдагра сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: тĕнчери лару-тăру çирĕп пулманни Швецин тĕрлĕ лару-тăрăва та кĕтсе илме хатĕр тăмалла тенĕ шухăша çирĕплетсе парать. Швеци çывăхĕнчи территорисенче вăрçă пуçланма пултарать. Çакă вăл Швецие вăрçа хатĕр тăма хушса тăрать. Гансон çапла каланă: Швецие тапăнсан правительство тата çарăн аслă руководстви йышăнакан мерăсем çителĕксĕр пулма пултараççĕ, тĕпри влаçпа вырăнсенчи влаçсем хушшинче çыхăну татăлсан командирсемпе граждăнла влаçсем хăйсем пĕлнĕ пек кĕрешмелле пулса тăма пултарать. «Çавăнпа та,—тенĕ Гансон,—верховнăй главнокомандующи çар начальникĕсене приказ панă, ăна правительство ырланă; çав приказ тăрăх пĕтĕм команднăй составăн, çӳлтен приказсем памаççĕ пулсассăн та, пĕр иккĕленмесĕр тата çийĕнчех хăйсен пуçарулăхĕпе ĕçлеме тытăнмалла пулать, войскăсемпе лайăххрах усă курмалла. Оборона хатĕрĕсене ĕçе ярасси пирки пĕртте иккĕленмелле мар», тенĕ. Приказра тата çакна асăрхаттарса хăварнă, тенĕ Гансон: çавăн пек условисенче суя приказсем сарма пултараççĕ, çавăнпа та хирĕç тăма пăрахмалли çинчен калакан пĕлтерӳсене суя пĕлтерӳсем тесе хакламалла.

## ЧИЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТĔНĔЛ ДЕРЖАВИСЕМПЕ ÇЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх Чили Америкăри пур çĕршывсен правительствисене те тĕнĕл держависемпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахни çинчен пĕлтернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Чили президенчĕ стратегиллĕ портсене, руда кăларакан центрсене тата Чилин кăнтăр пайĕнчи районсене, нимĕçсем чылай йышлăн пурăнакан районсене, çар енчен контрольлесе тăмалли çинчен декрет пичетлесе кăларнă.

## ИТАЛИРЕ ФАШИСТСЕНЕ ХИРĔÇ САБОТАЖ ТĂВАÇÇĔ

ЖЕНЕВА, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Нейе Цюрхер Цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: Италин Венецири гаваньре тăракан «Сатурина» ятлă пысăк парохочĕ çинче пушар тухнă, пушар 2 миллион лир чухлĕ сиен кӳнĕ. Пушар экипажăн пĕр членĕ вут тĕртнĕ пирки тухнă.

Италин промышленноçĕпе транспортĕнче саботаж ӳснĕ пирки Муссолинин çĕнĕ декрет кăларма тивнĕ, çав декрет тăрăх производствăна пăртак çеç сиен кӳрсессĕн те 24 çула çити тĕрмене хупмалла.

### КĔСКЕН

Союзниксен Мальтăри истребителĕсем 1942 çулта противникăн 573 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав утраври зенитнăй артиллери тăшманăн 182 самолетне персе ӳкернĕ. Англи авиацийĕн 145 самолет пĕтнĕ, 89 летчик çăлăннă.

* * *

Итальянĕцсем юлашки вăхăтра Грецире террора тата вăйлатнă. Темиçе тĕлте çынсене массăллăн хĕнемелли йĕрке туса хунă. Оккупантсем Греци гражданĕсен çурчĕсемпе харпăрлăхĕсене çунтара-çунтара яраççĕ. Нумаях пулмасть Грецирен Италие 300 çынна тăлласа ăсатнă, вĕсем хушшинче Греци çарĕнче офицер пулнă çынсем те чылай. (ТАСС).

## Культсбор укçине тӳлеççĕ

КАНАШ. Вăтакас Татмăш ялсовечĕ тăваттăмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ытлашшипех тултарчĕ. 1942 çулшăн нимĕнле парăм та çук. Ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем 1943 çулхи культсбор укçине алла извещени иличченех тӳлесе татрĕç. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Данилов, Ефимов, Михайлов юлташсем, пуринчен малтан тӳлесе татса, ытти колхозниксене хăйсенчен пример илме чĕнчĕç. Ун хыççăн «Динамо» колхоз членĕсем П. Иванов, П. Макаров, И. Павлов юлташсем те культсбор укçине тӳлесе татрĕç.

**Т. ТУРХАН.**

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

# Всевобуч боецĕсен хĕллехи вĕренĕвĕ

«Вĕренӳре йывăр пулсан — çапăçура çăмăл», — тенĕ вырăссен аслă полководецĕ Суворов, хăйĕн чудо-богатырĕсене вĕрентнĕ чух. Суворовăн çак правилисене всевобуч боецĕсене хĕлле вĕрентнĕ чух аса илмелле.

Боеца хĕллехи условисенче çапăçма вĕрентессин хăйĕн уйрăмлăхĕсем тата çав тери çирĕп требованийĕсем пур. Боецăн çанталăкăн хаяр условийĕсене тӳссе ирттерме хăнăхмалла. Вăл хăй умĕнчи задачăна темле хаяр сивĕсенче те, тăманлă çанталăкра та пурнăçлама пултармалла.

Минометчиксене, пулеметчиксене, бронебойщиксене материальнăй чаçе йĕлтĕрсем çине хăвăрт вырнаçтарма, хăвăрт илме тата йĕлтĕр çине вырнаçтарса лартнă хĕçпăшалпа пеме вĕрентмелле.

Снайперăн хĕллехи çапăçу валли лайăх хатĕрленмелле, мĕншĕн тесен унăн хăй ширакан тăшмана чăтăмлăн сăнама лекет, паллă мар улшăнусене темиçе сехет хушши сăнаса, меллĕ вăхăт килсе тухсан тăшмана пĕрре персех ӳкермелле.

Автоматчикăн йĕлтĕрпе çӳреме лайăх пĕлес пулать. Унăн тăшман çине кĕтмен çĕртен, хăвăрт пырса тапăнмалла, ăна хăйĕн вут-çулăмĕпе çухату тӳстермелле, унăн речĕсенче пăтрашу кăлармалла, пĕр вырăнтан хăвăрт çухалса тепĕр вырăна пырса тухмалла. Автоматчиксен танксен десанчĕпе пĕрле çапăçма лайăх пĕлмелле, мĕншĕн тесен йĕлтĕрсене танкран кăкарса вĕсем хыççăн шуса пыма лекет.

Кашни боеца хăй валли тĕрлĕ укрепленисем, тăшмана чăрмантармалли япаласем хăвăрт тума вĕрентмелле.

Хĕллехи çапăçусем боецпа командиртан çĕнтерӳ тума çирĕплĕх, кĕрешӳри йывăрлăхсене тӳссе ирттерме хăнăху тата чăтăмлăх ыйтаççĕ.

Тăшмана хĕллехи условисенче вăйлăн пырса çапма пĕлес, тени вăл йĕлтĕрпе çӳрес техникăна лайăх пĕлсе, йĕлтĕр çинчех тăрса çапăçма пĕлмеллине пĕлтерет. Анчах, çакăнпа пĕрлех, йĕлтĕрпе çӳреме, май килмен чухне йĕлтĕрсемсĕр те çапăçма вĕренмелле.

Боецсене йĕлтĕрпех тарăн юр тăрăх упаленме, урăх вырăна хăвăрт та тĕрĕс куçма, тăшман асăрхаса ĕлкĕриччен хăвăрт выртма, тăма тата йĕлтĕрсĕр упаленме вĕрентмелле. Хăй хĕçпăшалне темле сивĕ çанталăкра та пĕр чăрмавсăр ĕçлеттерме, штык вĕççĕн çапăçма вĕрентмелле.

Боеца хĕллехи условисенче хăй валли ячейкăсем чавса вĕсене палăрмалла мар тума, тăм илессине хирĕç кĕрешме вĕрентмелле.

Çаксем пулаççĕ ĕнтĕ всевобуч боецне хĕлле вĕрентмеллин задачисем.

Всевобуч пунктĕнчен вĕренсе тухнă боец çапăçусенче татăклăн та паттăррăн наступлени тума, чăтăмлăн хӳтĕленме, пĕлсе разведка тума пултармалла. Çак задачăсене пурнăçлас тесен, ăшă пӳртре вĕренес йăлана пĕтерес пулать. Программăн пур разделĕсене те хĕллехи çанталăкăн чăн-чăн условийĕсенче туса ирттермелле.

Йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлесси çине уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхмалла. Анчах программăра йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме вăхăт сахал панă. Çав вăхăта йĕлтĕрпе çӳреме вĕренессин тĕп правилисене тата йĕлтĕре пăхса усрама вĕренес ĕç валли памалла. Йĕлтĕрпе çӳреме, йĕлтĕр çинчех çапăçма вĕренме кирлĕ вăхăта программăн ытти уйрăмĕсене пĕлсе йĕркеленипе тупмалла. Çав занятисем йĕлтĕрпе çӳреме вĕренессипе таччăн çыхăнса тăмалла.

Хĕллехи вĕренӳ командирпа унăн политика енĕпе ĕçлекен помощникĕнчен нумай ыйтать. Занятире пĕр-пĕр приема кăтартуллăн тăвайман командир хĕллехи вĕренĕвĕн задачине кирлĕ пек пурнăçлама пултараймасть.

1942—43 çулти хĕлпе туллин усă курас пулать. Йĕлтĕрсем пур, вĕсем кашни вĕренекен валлиех çитмелле. Боеца йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентесси çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхманни çеç чăрмав кӳме пултарать.

Тактикăллă занятисене усă вырăнта туса ирттерни йĕлтĕрпе çӳреме вĕренме анлă майсем туса парать. Ку занятисенче йĕлтĕрпе патаксăр тата патакпа çӳреме хăнăхмалла; йĕлтĕрпе чухне выртса, тăрса, чĕркуçленсе пеме, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна шуса, упаленсе куçма, ӳкме, тăма, штыкпа çапăçма вĕренмелле, граната ывăтма, маскировка тума тата тăм илессине хирĕç кĕрешме вĕренмелле.

Халиччен пĕлмен уя, вăрмана çĕр каçмалла походсем туни боецсене тӳсĕмлĕх, хăнăху парать, хăй пĕлмен вырăна хăвăрт тавçăрса илме, çĕрле çулсăр-йĕрсĕр çӳреме хăнăхтарать. Ун пек походсене çанталăкăн хуть те мĕнле условийĕсенче те тумалла, кашнинчех боец хăйпе илекен япаласен йывăрăшне ӳстерсе пымалла.

Всевобуч боецĕсен пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăма лайăх хатĕрленсе çитмелле.

Генерал-майор **Н. Пронин.**

Шупашкарти ликерпа эрех заводĕн дирекцийĕпе парторганизацийĕ тата завкомĕ Главспирт системинче 42 çул ĕçленĕ ĕç геройĕ, ВКП(б) ватă членĕ, заводăн эрех ăсатса тăракан цехĕн начальникĕ

**Феодосий Данилович КРАВЧУК юлташ**

йывăр чирленĕ хыççăн вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

С 26/I—1943 г. Карточное Бюро при Наркомторге ЧАССР приступает к выдаче карточек на февраль месяц 1943 года.

Карточки будут выдаваться ответственным лицам, оформленным приказом в учреждениях, с предъявлением в картбюро паспорта и выписки из приказа.

Все предприятия, учреждения и организации вместе с требованием на карточки должны представить копии заведенных в январе 1943 г. в Горисполкоме списков рабочих, служащих, иждивенцев и детей на печатание карточек на март месяц 1943 года.

Не представившим заявки на март месяц 1943 года карточки выдаваться не будут.

Выдача стандартных справок на февраль месяц 1943 года уличным комитетам, домоуправлениям и комендантам домов будет производиться в картбюро с 25 I—43 года.

**Чебоксарское картбюро.**

**Возвращайте** посуду из-под водки и водочных изделий. Все продуктовые магазины и ларьки принимают ее в неограниченном количестве.

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 304 Типография №. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 84 п.